Петĕр Ялкир

**Ытарайми çĕр-шыв**

Тăван Чăваш çĕр-шывĕ
Ытарайми хитре.
Ун илемне кĕртет ав
Элкеш пики тĕрре.

Тăван Чăваш çĕр-шывĕ
Калама çук пуян.
Ун ылтăнне пухатпăр
Пӳлмесене уйран.

Тăван Чăваш çĕр-шывĕ
Куç виçейми капмар.
Чапне сарсах пыраççĕ
Канаш е Шупашкар.

Тăван Чăваш çĕр-шывĕ
Çав териех маттур.
Атăл çинче ГЭС çутрĕ,
Ун Улăп трактор пур.

Тăван Чăваш çĕр-шывĕ
Тĕлĕнмелле ăста.
Реле, сервант, пир-авăр
Каять Бухарестах.

Тăван Чăваш çĕр-шывĕ
Никам çĕнми патвар.
Чапай та Николаев:
"Пул, - теç, - тата хастар!"

*Ялкир, П. Ытарайми çĕршыв : сăвă / П. Ялкир //. Ман ялав – чăвашлăх / П. Ялкир. – Шупашкар, 2005. – С. 46.*